


Тĕрлĕ тĕслĕ хăмпă, таса та тирпейлĕ пӳлĕмсем, хаваслă юрă-кĕвĕпе тулнă зал - çакăн пек ӳкерчĕкпе кĕтсе илчĕ хăйĕн студенчĕсене, вĕрентекенĕсене, хăнасене Мускав патшалăх машиностроени университечĕн филиалĕ - Шупашкарти политехника институчĕ авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче. Пĕлӳ кунĕ вĕренӳ заведенийĕшĕн тĕп уяв пулнине кура сумлă хăнасем те йышлăн килнĕ. Вĕсенчен пĕри - Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев.

Асăннă вузра - 5 факультет, вĕсенче пурĕ 10 направленипе професси алла илме май пур. Пĕрремĕш курса вĕренме кĕнĕ 153 студентран 113-шĕ куçăнлă мелпе пĕлӳ илĕ. Инженерипе çыхăннă факультетсене кĕрекенсен йышĕнче физикăпа ППЭре 70 балл пухнисем те пурри савăнтарать аслă шкул ертӳлĕхне. Пĕтĕмĕшле илсен института кăçал вĕренме кĕнисенчен Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕнче чи лайăх кăтартулли 250 балл

пухнӑ. Институт студенчӗсен географийӗ анлӑ: пурӗ кунта 36 регионран.

Аслӑ шкулӑн директорӗ - Александр Агафонов студентсемпе преподавательсене ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗнче ӑнӑҫу суннӑ май ертӳлӗх вӗсене пурне те кунта хӑтлӑ пултӑр тесе хӑйӗнчен мӗн килнине пурнӑҫлама шантарчӗ.

Михаил Игнатьев асӑннӑ институтра хатӗрлекен специалистсем малашне ҫӗр-шывӑмӑра тата та ытларах кирлӗ пулассине, ҫавна май тӳлевсӗр вӗренме квота нумайланассине пӗлтерчӗ. Инноваци вӗренӗвне хута яма пултарни вӗренекенсен професси аталанӑвӗшӗн пӗлтерӗшлӗ пулнине палӑртрӗ. Ӑста специалистсем вара ӗҫсӗр юлмасса шантарчӗ: паян чылай предприятире тивӗҫлӗ кадрсем ҫитмеҫҫӗ. Института тин ура ярса пусакансем вара хӑйсенчен мӗн кӗтнине пурнӑҫлама сӑмах пачӗҫ.

Пӗлӳ кунӗпе асӑннӑ аслӑ шкул коллективне, кунта вӗренекен хӗр-каччӑн ашшӗ-амӑшне ЧР вӗренӳпе ҫамрӑксен политикин министрӗ Владимир Иванов, Шупашкарти арҫынсен мӑнастирӗн настоятелӗ Василий архимандрид та саламларӗҫ. Чӑваш Ене 20 ҫул каялла пӗрремӗш хут килнӗ те кунтах тӗпленнӗ православи тӗнне ҫирӗп пӑхӑнса пурӑнакан француз ҫамрӑксене ҫапла ырӑ сунчӗ: "Кунта юлнишӗн эпӗ пӗртте ӳкӗнместӗп. Ҫак ҫӗре, унӑн ҫыннисене юратрӑм та вӗсен пӑшӑрханӑвӗ-савӑнӑҫӗпе сывлатӑп. Чи малтанах хӑвӑра юратмалла, хӗвел енне туртӑнмалла, илеме курмалла. Ҫавӑн пек чухне чӑн-чӑн ҫын пулаятӑр..."

* * *


С ДНЕМ ЗНАНИЙ!
ЧГУ имени И.Н. Ульянова
Информатики и вычислительной техники факультет